Муркаш округӗн территори пайӗсен ӗҫӗ-хӗлӗ

# Ильинка территори пайӗ

## *Апчар, Тренккӑ, Вӑрманкасси, Васильевка выҫҫӑлкки, Ильинка, Куҫкин, Макаҫи, Мемеккасси, Ойкас, Кив Шоккӑн, Тяпакасси, Хопкӗпер, Хунтӑкасси, Хыркасси, Чӗпӗлкасси, Мӑн Шашкар, Шерӗк ялӗсем*

**Марина СОКОЛОВА, территори пайӗн пуҫлӑхӗ:**



– Территори пайӗн территорийӗнче 17 ял. Сахалах мар. Ҫавна май вырӑнсенче татса памалли ыйтӑвӗсем те сахалах мар тупӑнаҫҫӗ. Апла пулин те юлашки ҫулсенче республикӑра ял ҫыннисен пурнӑҫ хӑтлӑхне лайӑхлатса пырассипе тӗрлӗрен программӑпа проектсем пурнӑҫа кӗме тытӑнни ку тӗлӗшпе пирӗншӗн пысӑк тӗкӗ пулчӗ.

Пуҫарулӑх бюджечӗн программинех илер. 2017 ҫулта вӑя кӗнӗ республика программине хутшӑнса юлашки ҫулсенче ялсенче мӗн чухлӗ ыйтӑва татса пама пултармарӑмӑр пулӗ. Халӗ те асӑннӑ программӑна ҫынсем активлӑ хутшӑнаҫҫӗ. Ҫуллен ҫапла майпа 3 – 4 объектра ӗҫсем туса ирттеретпӗр. 2021 ҫулта 4 проект, 2022 ҫулта 3 проект пурнӑҫа кӗртрӗмӗр. Кӑҫал валли те республика комиссийӗ пирӗн 3 проекта йышӑннӑ. Тӗрӗссипе ҫак вӑхӑта эпир ку объектсенчи ӗҫсене вӗҫлерӗмӗр те ӗнтӗ.

Хунтӑкасси ялӗнче Лесная, Садовая урамсенче тата Зеленый тӑкӑрлӑкра ҫула вак чул сарса хытарнӑ, ҫиелтен асфальт ванчӑкӗ сарса тикӗслесе пусӑрӑнтарнӑ. «КАРЬЕРСТРОЙ» ООО ӗҫсене пахалӑхлӑ пурнӑҫларӗ, ял ҫыннисем питӗ кӑмӑллӑ.

Макаҫи ялӗнчен Колхозная тата Волжская урамсем урлӑ тухмалли ҫула та ҫапла майпах юсама май килчӗ. Тяпакасси ялӗнче вара хӑйсемшӗн пӗлтерӗшлӗ пулса тӑракан шыв ыйтӑвне татса пачӗҫ – шыв уҫламалли ҫӗнӗ башня лартрӗҫ.

Шыв ыйтӑвне татса парассипе кунпа пӗрлех пирӗншӗн Чӑваш Республикин Строительство министерствин «Модернизация и развитие сферы ЖКХ» программи пӗлтерӗшлӗ пулса тӑрать. Программӑна хутшӑнса 2021 ҫулта Мемеккассинче, 2022 ҫулта Мӑн Шашкарта тата Вӑрманкассинче шыв башнисене улӑштартӑмӑр. Кӑҫал кун пек ӗҫсене Апчарта тата Хопкӗперте туса ирттеретпӗр. Хопкӗперте паянхи куна ҫак ӗҫсем пуҫӑннӑ ӗнтӗ.

Культура пурнӑҫӗнче те юлашки ҫулсенче лайӑх улшӑнусем пулса иртни курӑнать. «Культура малой Родины» проектпа Апчар клубӗнче капиталлӑ юсав ӗҫӗсем пуҫланчӗҫ. Ҫак вӑхӑта строительсем маччана ӑшӑ тытмалла туса йӗркене кӗртрӗҫ, пластик чӳречесем лартрӗҫ. Тулашӗнче те ӗҫсем туса ирттермелле.

«Сывлӑх сыхлавӗ» наци проекчӗн «Развитие системы первичного звена здравоохранения» регион проекчӗпе кӑҫал Мӑн Шашкарта ҫӗнӗ ФАП хута яма палӑртатпӑр. Апла пулсан ҫывӑх вӑхӑтрах ку тӑрӑхра пурӑнакансене вырӑнта медицина пулӑшӑвӗпе тивӗҫтересси самай лайӑхланӗ.

Ырӑ чунлӑ хастар ӗҫченсене, старостӑсене, ял активисчӗсене, спонсорсене пысӑк тав сӑмахӗ каласшӑн. Пӗрлехи ыйтусене пӗччен-иккӗн кӑна ниепле те татса пама май ҫук. Ял старостисем Владимир Ильин, Галина Овчинникова, Лариса Раскова, Валентин Данилов, Клавдия Сенькова, депутатсен округ Пухӑвӗн депутачӗ Михаил Бычков яланах территори пайӗпе ҫыхӑнса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсене кирек хӑҫан та шанма пулать.

Александр Колбасов уйрӑм тав сӑмахне тивӗҫ. Хӑйӗн пуҫарулӑхӗпе, хӑй тӑрӑшнипе Ильинкӑра ҫынсене ҫуран каҫса ҫӳреме питӗ илемлӗ икӗ кӗпер туса пачӗ.

Ятарлӑ ҫар операцине хутшӑнакансене пулӑшасси пирӗн таса тивӗҫ пулса тӑчӗ. Ҫынсем укҫа-тенкӗпе те, тӗрлӗ хатӗрпе те, ҫимӗҫпе те пулӑшма тӑрӑшаҫҫӗ. Тренккӑ Культура ҫуртӗнче, Вӑрманкасси клубӗнче тата Мӑн Шашкар ялӗнче маскировка сечӗсем ҫыхаҫҫӗ. Ку ӗҫсене Ирина Мочалова, Людмила Жигалова, Лариса Таймаскина йӗркелесе пыраҫҫӗ.

**Михаил БЫЧКОВ, «Юман» ООО ертӳҫи, депутатсен Муркаш округ Пухӑвӗн депутачӗ:**



– Пӗрремӗш созыв кӑна мар ӗнтӗ мана вырӑнта пурӑнакан ял ҫыннисем район, халӗ округ шайӗнчи депутата суйлаҫҫӗ. Иртнӗ ҫулхи суйлавра та 7-мӗш Ильинка суйлав округӗпе депутатсен округ Пухӑвӗн депутачӗн тивӗҫӗсене пурнӑҫлама шанчӗҫ. Депутатӑн пӗрремӗш тивӗҫӗ вара шанӑҫа тӳрре кӑларасси, суйлавҫӑсен наказӗсене пурнӑҫлассишӗн ҫине тӑрса тӑрӑшасси тесе шутлатӑп.

Юлашки ҫулсенче ҫынсен пуҫарулӑхне тӗпе хурса вырӑнти инфраструктурӑна аталантарассин программи – пуҫарулӑх бюджечӗн программи пирӗн патра та анлӑ ҫул тупрӗ. Ҫапла майпах кӑҫал Тяпакассинче шыв башни туса лартма май килчӗ. Александр Пагеев, Екатерина Данилова активистсем, Клавдия Сенькова староста питӗ тӑрӑшрӗҫ. Эпӗ те хам тӳпене хыврӑм, кунта вырнаҫтарма тимӗр-бетон ункӑ туянса патӑм.

Тӗрлӗрен мероприяти ирттересси укҫа-тенкӗсӗр пулмасть. Май ҫитнипе шкула, ыттисене ку енӗпе пулӑшма тӑрӑшатӑп. Ҫӗнӗ ҫул уявӗ умӗн шкул команди валли футболкӑсем 10 пин тенкӗлӗх туянса панӑччӗ. Балл ташшисен конкурсне хутшӑнма та шкулта вӗренекенсем валли 8 комплект платье туяннӑ. Сӑмах май, пирӗн шкул ташӑҫисем округра мала тухма пултарчӗҫ, республикӑра та призлӑ вырӑн йышӑнчӗҫ.

Ятарлӑ ҫар операцине хутшӑнакан хамӑр яшсене тӗрлӗ енлӗ пулӑшупа тивӗҫтерсех тӑратпӑр. Кашнин пулӑшӑвӗ, пысӑках мар пулин те, пӗрле вара самай пысӑк ыйтусене татса пама май ҫитеретпӗр. Фронтри ентешсем валли ҫапла майпа квадрокоптер та туянса ӑсатнӑччӗ.

Ял кунӗсем, спорт ӑмӑртӑвӗсем пирӗн патра ҫӳллӗ шайра иртеҫҫӗ. Нумаях пулмасть Васильевка выҫҫӑлккин кунне хаваслӑ ирттертӗмӗр. Хӗлле вара «Юман» ООО парнисене ҫӗнсе илессишӗн йӗлтӗрҫӗсен ӑмӑртӑвне ирттеретпӗр. Мала тухнисене медальсемпе, грамотӑсемпе, парнесемпе чыслатпӑр.

Лариса Раскова, Раиса Витлейкина, Александр Смирнов, Владимир Ильин старостӑсене, Алексей Вальков активиста палӑртса хӑварасшӑн. Пӗрлехи ӗҫшӗн вӗсем чӑннипех ҫунса тӑраҫҫӗ.

Малашлӑх плансем татах ҫук мар. Ҫӗнӗ масар патне ҫул тӑвасшӑн. Проектпа смета докуменчӗсене тутартӑм ӗнтӗ. Ыйтӑва пуҫарулӑх бюджечӗн мелӗпе ҫитес ҫул татса пама шутлатпӑр.

**Клавдия СЕНЬКОВА, Мӑн Сӗнтӗрти «Дружба» магазин сутуҫи, Тяпакасси ялӗн старости:**



– Хальхи вӑхӑтра ялта шывсӑр ларасси мӗн иккенне ҫакна туйман-курман ҫын та ӑнланатех пулӗ. Ыттисӗр епле те пулин чӑтса-тӳссе пурӑнма пулатех пулин те, шывсӑр май ҫук. Ӗҫме-ҫиме те куллен кирлӗ, хуҫалӑхра та, выльӑх-чӗрлӗхӗ валли те, пахча ӗҫӗсенче те. Эпир вара ҫакна пӗтӗмпех тӳссе курнӑ темелле. Ҫулла кӑна мар, хӗл кунӗсенче шывсӑр тертленеттӗмӗр.

Тӗрӗссипе шыв башни те пулман. Ун вырӑнне ял патӗнче пысӑк шыв пички вырнаҫтарнӑччӗ. Шыв яла пӑрӑхпа ҫавӑнтан пырса тӑратчӗ. Хӗл кунӗсенче вара пичкери шыв шӑнса ларать. Ҫавӑнпа та насуспа шыва тӳрремӗн шыв пӑрӑхне уҫлатчӗҫ. Ял хушшипе хурса хӑварнӑ пӑрӑхӗ те хавшакланса ҫитнӗччӗ ӗнтӗ.

Пӗлтӗр ял ҫыннисемпе пухӑнса ҫакӑн пек йышӑну турӑмӑр: епле пулсан та шыв ыйтӑвне пӗрле татса парасах пулать. Малашне кун пек пурӑнма май ҫук. Ҫапла вара ял ҫыннисенчен укҫа пуҫтарса ял хушшипе пӑрӑх траншейи чавтартӑмӑр, хамӑр укҫапа туянса пӑрӑх хурса хӑвартӑмӑр, килӗрен шыв кӗртсе патӑмӑр.

Кӑҫал ял пуҫӗнче ҫӗнӗ шыв башни лартас терӗмӗр. Ӗҫсене пуҫарулӑх бюджечӗн мелӗпе туса ирттерме май килчӗ. Ӗҫсен аукциона тӑратнӑ хакӗ 1 миллион ҫурӑ тенкӗрен те иртетчӗ. Контракт хакӗ 1,35 млн тенкӗлӗхе яхӑн пулчӗ. Строительство ӗҫӗсене «ТЕХЭНЕРГОКОМПЛЕКТ» ООО строителӗсем вӑхӑтра тата пахалӑхлӑ туса ирттерчӗҫ.

Ӗҫсем пынӑ чухне те ял ҫыннисене шывсӑр лартман. Яла шыв йӗркеллӗ парса тӑнӑ. Халӗ пӗр уйӑх ытла ӗнтӗ эпир ялта шыв енчен ҫӑтмахри пекех пурӑнатпӑр. Пӗтӗмпех йӗркеллӗ.

Ҫӗнӗ шыв башни лартрӑмӑр пулин те, унчченхи шыв пичкине те хӑйӗн вырӑнӗнчех хӑварас терӗмӗр. Ҫу кунӗсенче унта запасра шыв тытма йышӑнтӑмӑр. Пушартан асӑрханассипе те ҫакӑ ял ҫыннисемшӗн пӗлтерӗшлӗ тесе шутлатпӑр.

**Кӑларӑма**
**Владислав ШАПОШНИКОВ**
**хатӗрленӗ.**



**Тяпакассинчи шыв башнине кӑҫал пуҫарулӑх бюджечӗн программипе туса лартма май килнӗ.**



**Субботникра. Атӑл юхан шывӗн ҫыранӗсем тасарах пулӗҫ.**



**Ҫуран ҫӳрекенсем валли ҫакӑн пек хитре кӗперсене Ильинкӑра Александр Колбасов хӑйӗн вӑйӗпе туса лартнӑ.**




**Апчар клубӗнче капиталлӑ юсав ӗҫӗсем пуҫланнӑ. Ӗҫсене «Культура малой Родины» проект шайӗнче туса ирттереҫҫӗ.**